Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

105 (7959) № * Юн кун, 2011 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## 15 çул информаци уçлăхĕнче

Истори страницисем

***Чăваш Республикин влаç органĕсен порталĕнчи WWW.MORGAU.CAP.RU сайта паян уйăхсерен 80–120 пин çын вулать. Вăл шутра – Америка çĕр-шывĕсенче, Исландире, Польшăра, Киргизстанра, Белоруссире тата тĕнчери ытти нумай-нумай кĕтесре пурăнакансем те. Районта пурăнакансемшĕн вара сайт тĕрлĕ хыпар пĕлтерӳçи вырăннех.***



Администраци сайтне йĕркелессин пуçламăшĕнче Валерий Григорьевич Лаврентьев тăнине асăнмасăр иртме çук. Пензăри политехника институтне вĕренсе пĕтернĕ радиоинженер малтанах çĕр-шывшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ объектсенче тăрăшнă. Муркашра ĕçлеме пуçласан та вăл çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртме тăрăшассишĕн ăнтăлма пăрахман. Çавăнпах ĕнтĕ Муркаш районĕн официаллă сайчĕ республикăра чи «ватти». Валерий Григорьевич ун чухне хăйĕн ĕçтешĕсемпе – Шупашкар район администрацийĕнче ĕçленĕ Д. Жаворонкинпа тата Етĕрне район администрацийĕнче вăй хуракан А. Васильевпа – тачă çыхăнура ĕçленĕ.

Районта çĕнĕ технологисене вăя кĕртессине ун чухнехи район пуçлăхĕ В.И. Вязов та нумай тимлĕх уйăрнă. Вăл вăхăтра ял тăрăхĕсем валли 12 компьютер илнĕ.

Района информатизацилессинче Иван Николаевич Кондратьевăн тӳпи те питĕ пысăк. Вăл çине тăнăран ĕнтĕ ун чухне кашни ял администрацийĕн сайтне туса хунă, 20 шкулăн, ял хуçалăх предприятийĕсен сайчĕсем ĕçлеме тытăннă.

Çапла вара Муркашсен сайчĕ сервер çине пĕрремĕш вырнаçнă. Ун хыççăн – Шупашкар районĕн. Пирĕн район сайчĕ вара Пĕтĕм Раççейри сайтсен конкурсĕнче «Район администрацийĕн чи лайăх сайчĕ» номинацире çĕнтерӳçĕ пулма та пултарчĕ. Паян та вăл лайăххисен, малта пыракансен ретĕнче.

6 çул каялла, улшăнусене шута илсе, районти ял тăрăхĕсен 16 сайчĕ пĕр кунра «çуралчĕ». Çавăнтанпа вĕсен летопиçĕ те çырăнса пырать. Вĕсем те хăйсем хушшинчи конкурссенче мала тухас тесе кăна мар, сайта йĕркелесе пыракансем çынсене интереслĕ те усăллă информаципе тивĕçтерес тесе кунсерен тăрăшаççĕ.

Паян вара тĕллевсем татах та пысăк. Район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пай пуçлăхĕ В.Г. Лаврентьев пĕлтернĕ тăрăх муниципаллă услугăсемпе электронлă майпа тивĕçтерессине йĕркелеме, районти муниципаллă тытăмсен пĕрлĕхлĕ информаци тытăмне туса хума, районăн фото- тата видеоархивне, видеостудине йĕркелеме вăй çитерессшĕн. Районăн Интернет тата кабель телевиденине ĕçлеттерсе ярас шухăшсем те пур иккен. Çакă пĕтĕмпех районта пурăнакансен пурнăçне лайăхрах тума май парĕ.

Паян вара информаципе тивĕçтерекен пайра вăй хуракансем – В. Лаврентьев, Н. Григорьева, Н. Павлова тата А. Николаев – район сайтне интереслĕ, усăллă тума пулăшакансене портал 15 çул тултарнă ятпа саламласа тав сăмахĕ калаççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа татах та пысăкрах ӳсĕмсем тума пултарасса ĕненеççĕ вĕсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: кунсерен сайтри информацие çĕнетекенсем.**

## Тĕп ыйту – Президент Çырăвĕ

Информаци кунĕ

Черетлĕ пĕрлехи информаци кунĕ ку хутĕнче декабрĕн 27-мĕшĕнче иртрĕ. Республика представителĕсемпе район администрацийĕн, федераллă структурăсен районти органĕсен ответлă ĕçченĕсем Çатракасси, Турай, Мăн Сĕнтĕр, Оринин ял тăрăхĕсене çитсе ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç, Муркашри А.Н. Вязов предприниматель патĕнче, Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче пулса курчĕç.

Çулталăк вĕçленсе пынă май татса памалли, малашлăх валли палăртмалли ыйту-задачăсем сахал мар. Пĕрлехи информаци кунĕнче сӳтсе явма пăхнă ыйтусен анлăшĕ те çавнах çирĕплетет. Кусем вĕсем иртнĕ суйлав кампанийĕн итогĕсем те, çынсен пурнăç шайне лайăхлатассипе влаç органĕсем умĕнче тăракан задачăсем те, республика территорийĕнче хăрушсăрлăха тивĕçтерессi те, хаçат-журнал çырăнтарасси те.

Апла пулин те тĕп ыйту ку хутĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д.А. Медведев РФ Федераллă Пухăвне янă Çырăвăн тĕп положенийĕсемпе паллаштарасси пулчĕ.

Президент хăйĕн çулленхи Çырăвĕнче çĕр-шывра пурнăçа кĕртме палăртакан политика реформин ыйтăвне малти вырăна кăларчĕ. Чи пĕлтерĕшлисем тесе кунта çаксене палăртмалла. Чи малтанах ку вăл малашне Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ертӳçисене регионта пурăнакансем хăйсем тӳрремĕн сасăласа суйлассине пурнăçа кĕртесси. Президент партисене регистрацилессин тытăмне ансатлатма сĕнет. Ун шучĕпе 500 çынран кая мар заявка параççĕ тата вĕсем çĕр-шыв регионĕсен 50 процентĕн представителĕсем пулса тăраççĕ пулсан, партие регистрацилеме май пур. Патшалăх Думине тата регионсен саккун йышăнакан органĕсене депутата суйланма алă пуснисем пуçтарассине те Президент ытлашши тесе палăртать. Президента суйлассипе те сĕнӳсем пур: кандидатăн суйлавçăсем алă пуснине 300 пин, парламентра тăман парти представителĕсен – 100 пин пуçтарсан çителĕклĕ.

Президент Патшалăх Думине суйламалли системăна улăштарма сĕнет: депутатсемпе суйлавçăсем хушшинчи çыхăну çирĕпрех пултăр тесен пропорциллĕ майпа 225 округпа депутатсене уйрăммăн суйласан тĕрĕсрех тесе палăртать. Тĕп тата регионсенчи суйлав комиссийĕсене йĕркелесси тивĕçтермест. Д.А. Медведев шучĕпе суйлав комиссийĕсенче политика партийĕсен представителĕсем ытларах пулмалла.

Çӳлте асăннă сĕнӳсене пурнăçа кĕртни çĕр-шыври демократилĕх шайне малалла аталантарма май памалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Указ

## И.Б. Моторин – республика премьер-министрĕ

Республика Президенчĕ Михаил Игнатьев кăçалхи декабрĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ пулма Иван Борисович Моторина уйăрса лартасси çинчен Указа алă пуснă. Унччен И.Б. Моторин кандидатурине республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Парламент ларăвĕнче ырласа йышăннă.

И.Б. Моторин маларах ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ пулнă.

## Саламлатпăр, телей сунатпăр!

Райхаçатпа çыхăну тытакан кашни ыр çынна çывхарса килекен 2012 çул ячĕпе саламлатпăр!

Чи малтан «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене тав тăватпăр. Вулакансен йышĕ çуллен ӳссе пыни пире тăрăшарах ĕçлеме хистет.

Ертӳçĕсене, депутатсене, влаç органĕсен ĕçченĕсене унчченхи пекех килĕштерсе ĕçлеме чĕнетпĕр.

Обществăлла корреспондентсем яланхи пекех пысăк пуçарулăхпа палăрса тăрасса шанатпăр.

Почта ĕçченĕсене малашне те райхаçата вулакан патне вăхăтра çитерессишĕн ырми-канми ĕçлеме вăй-хал сунатпăр.

Районти кашни çынна Çĕнĕ çулта ăнăçу, лайăх кăмăл, сывлăх сунатпăр! Телейлĕ пулăр! **Райхаçат редакцийĕ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Районти информаци ресурсĕсене аталантарассине пысăк тӳпе хывнăшăн, сайтсене техника тĕлĕшĕпе пахалăхлă тытса тăнăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2011 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи 1382 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Галина Ивановна ЕРМАКОВĂНА**, Юнкă ял тăрăх администрацийĕн ертсе пыракан эксперт специалистне;

– **Тамара Алексеевна МЕШКОВĂНА**, Муркаш ял тăрăх администрацийĕн тĕп эксперт специалистне;

– **Лидия Петровна ПАВЛОВĂНА**, район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертсе пыракан эксперт специалистне;

– **Галина Николаевна СИЛАНТЬЕВĂНА**, Ильинка ял тăрăх администрацийĕн тĕп специалистне;

– **Светлана Георгиевна СОКОЛОВĂНА**, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Сĕнтĕрти ялти библиотека заведующине;

– **Анжелика Васильевна УГАРОВĂНА**, Катькас ял тăрăхĕнчи Катькасри ялти библиотека заведующине.

Уяв кунĕсенче

## Больницăна каяс тесен

Çĕнĕ çул уявĕ хыççăнхи канмалли кунсенче районти тĕп больница çак графикпа ĕçлет:

январĕн 1–5-мĕшĕсем – дежурнăй службăсем ĕçлеççĕ;
январĕн 6-мĕшĕ – тулли ĕç кунĕ;
январĕн 7–8-мĕшĕсем – дежурнăй службăсем ĕçлеççĕ;
январĕн 9-мĕшĕ – специалистсем – шăмат кунхи графикпа;
январĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса – ĕç кунĕсем.

## Хăрушлăх ан пултăр, çапах та...

Район администрацийĕн гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру секторĕнчен пĕлтернĕ тăрăх уяв кунĕсенче пур служба та вăйлатнă режимпа ĕçлет.

Хăрушлăх тухсан вара пĕрлĕхлĕ пулăшу номерĕпе шăнкăравламалла: 112. Шăнкăрава йышăннă хыççăн сирĕн пата кирлĕ службăран пулăшу вăхăтра çитĕ. Апла пулин те уявсенче пурин те асăрхануллă пулмалла.

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, чи хисеплĕ аннене, хаклăран та хаклă хĕрĕме, кинĕме, йăмăка – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Эльвира Анатольевна ПЕТРОВĂНА** 30 çулхи юбилей ячĕпе ăшă туйăмпа саламлатпăр. Çирĕп сывлăхлă, ăшă кăмăллă, яланах тарават пулма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ашшĕпе амăшĕ, пиччĕшĕ, хунямипе хуньстарикĕ, тăванĕсем.**



Чи хаклă савнă мăшăра, юратнă аттене, ырă кăмăллă кукаçие, хисеплĕ тăвана – Муркашра пурăнакан **Геннадий Ананьевич РОМАНОВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсĕ пурри нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Кун-çулу вăрăм та такăр пултăр. Ачусен, мăнуксен хаваслă сассине итлесе, ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Тава Турра эсĕ пурришĕн, пире хавхалантарса пурăннишĕн. Тата Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Тавтапуç сана, аттеçĕм, пуриншĕн те. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 4 пиччĕшĕ çемйисемпе, 7 мăнукĕ, тăванĕсем.**

# Уяв ирттерме кунта питĕ меллĕ

Суту-илӳ ĕçĕ

Çĕнĕ çул уявĕ умĕн Муркаш райповĕ район çыннисене валли пысăк парне турĕ. Декабрĕн 23-мĕшĕнче халăхăн йышлă ыйтăвне тĕпе хурса Чапаев урамĕнче савăнăçлă самантра апатланăвăн çĕнĕ точки уçăлчĕ. Чи малтанах кунта залри хăтлăх куçа тыткăнлать. Сентресем тĕрлĕ ĕçме-çимепе питĕ пуян, çынсемшĕн чи пĕлтерĕшли вара – хаксем пысăк пулманни. Кунта тĕрлĕ уяв ирттерме питĕ меллĕ: пысăк та хăтлă зал, сирĕн кăмăла кура ăста та çамрăк ĕçченсем çĕнĕ йышши тĕрлĕ апат-çимĕç сĕнеççĕ, кăмăл пулсан кану самантне йĕркелеме пулăшаççĕ. Çавăн пекех кунта савăнăçлă кĕвĕ итлесе ăшшăн каласса вĕри чей ĕçме пулать.

район пуçлăхĕ И.В. Николаев коллективе тăрăшулăхне ырă енчен палăртса, малашне те район çыннисемшĕн ырă пуçарусене туллин пурнăçлама сĕнсе.

Çурт-йĕр çĕклес ĕç нихăçан та çăмăллисен шутĕнче пулман, ăна валли чылай вăхăт кирлĕ вĕт. Геннадий Павлов ертсе пыракан строительсен ушкăнĕ вара кĕске вăхăтра палăртнă ĕçе вĕçлерĕ. Август вĕçĕнче строительство ĕçĕ пуçланчĕ, халĕ ак Çĕнĕ çул тĕлне – пысăк парне. «Бриз» пиццерин çĕнĕ çуртне çĕнĕрен тума пилĕк миллиона яхăн укça-тенкĕ тăкакланă, мĕн пурнăçлани йăлтах район çыннисемшĕн вĕт.





Уява Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ, Центросоюз членĕ В.М. Павлов, республикăри ытти райпо канашĕсен председателĕсем килсе çитрĕç. Хисеплĕ хăнасем Муркашри суту-илӳ точкисенчи ĕç-хĕлпе паллашрĕç, хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтерчĕç. Палăртма кăмăллă, Муркаш райповĕ иртсе пыракан çулта çĕнĕрен икĕ лавкка уçрĕ, капиталлă юсав туса çĕнетнисем вара ытларах та.

– Муркаш райпо коллективĕ пирки манăн ырă сăмахсем кăна калас килет. Вăл халăх ыйтăвне туллин тивĕçтерет, хăй тивĕçне пурнăçлать. Ăна халĕ республикăра тата унăн тулашĕнче те аван пĕлеççĕ. Юлашки çулсенче вăл ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать, ĕçе тĕрлĕ çĕнĕлĕх кĕртет, черетлĕ суту-илӳ точки уçăлни те çавнах çирĕплетет, – терĕ

– Пирĕн тĕп тивĕç – çынсене кирек епле тавар туянма, вĕсен канăвне йĕркелеме майсем туса парасси, çавăнпа пĕрлех вара хакĕсем те вĕсене тивĕçтерчĕр. Çакăн пек уяв саманчĕ тăтăшах пултăрчĕ, çĕнĕрен çĕнĕ лавкка çĕклентĕрчĕ. Малашне те ку енĕпе тимлĕпĕр. «Бриз» Муркашра пурăнакансене кăна мар, аякри хăнасене те хапăл туса йышăнать, – терĕ Муркаш райпо канашĕн председателĕ Борис Васильевич Андреев. Строительство ĕçĕнче ырми-канми тăрăшнă ĕçченсене пурин ячĕпе те тав сăмахĕ каларĕ.

Ку заведенинче хăйне майлă уйрăмлăх пур, ятарлă пĕлӳ илнĕ специалистсем техĕмлĕ тĕрлĕ пиццăпа хăналама шантараççĕ, мĕн тĕрлĕ техĕмлĕ пицца кăна çук пулĕ сĕтел çинче: кăлпассипе туни, улма-çырларан пĕсерни тата ытти те. Илемлĕ савăт çинчи çимĕçе активмесĕр иртме çук. Эпир ытларах пĕр тĕрлине кăна çиме хăнăхнă вĕт, кунта вара кашнинех тутанма май пур. Çавăн пекех кунти ĕçченсем хаваспах тĕрлĕ рецептпа паллаштарассине, техĕмлĕ çимĕç хатĕрлес вăрттăнлăха уçассине пĕлтерчĕç. Апла пулсан çитсе килер унта.

Тĕрлĕ суту-илӳ точкисенче эпир ют тăрăхран кӳрсе килнĕ апат-çимĕçе курма, туянма хăнăхнă ĕнтĕ. Кунта вара йăлтах экологи тĕлĕшĕнчен таса, хамăр тăрăхра ӳстернĕ продукци. Муркаш райповĕ хамăр халăхран тăтăшах аш-какай, пахча-çимĕç пуçтарать, çавăнтан янтăлаççĕ те райпо апатлану точкисенчи техĕмлĕ çимĕçе. Çавăн пекех «Бриз» пиццеринче ушкăнпа хăналанма килсен автомашина валли вырăн та пур. Çĕнĕ точка уçăлнипе пĕрлех кунта çамрăк специалистсемшĕн хушма ĕç вырăнĕсем тупăнчĕç. Сăмах май палăртса хăвармалла, Муркаш райповĕ çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелессине, специалистсен пĕлӳ шайне ӳстерессине тĕп вырăна хурса ĕçлет. Çавăн пекех тин кăна вĕренсе тухнă çамрăк ĕçченсене ĕçе хăнăхтарассине те йĕркелет.

– Эпир хамăр пата пурне те хапăл туса кĕтетпĕр. Кану кăçĕ йĕркелес тесенсем маларах пĕлтерме пултараççĕ. Пĕлтермен пулсан та темех мар, сирĕн ыйтăва пурпĕр тимлĕхсĕр хăвармăпăр, – терĕ пиццери заведующийĕ М. Колбасова.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Редакци почтинчен

# Суйлав хыççăнхи шухăшсем

РФ Патшалăх Думипе республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ умĕн мăшăрăмпа иксĕмĕр каласса ларатпăр, суйлав итогĕсем мĕнле пулассине тĕшмĕртетпĕр. Малта «Единая Россия», 2-мĕш вырăнта КПРФ, 3-мĕшĕнче «Справедливая Россия» пулать пулĕ терĕмĕр. Шăп та лăп çакăн пек пулса тухрĕ.

Ăстан туйма пултартăмăр-ха çакна эпир? Депутатсем, партисем хăйсене мĕнле кăтартма пĕлнинчен паллах. Кунсăр пуçне ертсе пыракан партие халăх яланах малти вырăна хурса хисепленĕ. 4-мĕш вырăна «Патриоты России» тухать пулĕ тенĕччĕ. Çук, ЛДПР партийĕн ытларах пуç тавра шухăшлама пĕлмен, çăмăлттайла хăтланакан çамрăксем сасăланă пек туйăнать.

Вăт çак парти членĕсем, кандидачĕсем суйлав умĕнхи агитаци тапхăрĕнчех хăйсене хăйсемех чи япăх енчен кăтартнă пек туйăнать мана. Акă суйлав умĕн хăйсемшĕн сасăлама чĕнсе каласа ятарлă хаçат кăларăмĕ пичетлесе салатрĕç вĕсем. 1-мĕш страницăрах пысăк сас паллисемпе çапла çырни пур: «Подонки...».

Ак хайхи! Кусем хальхи вăхăтра Раççей халăхне ертсе пыракан парти членĕсене çавăн пек хак параççĕ иккен. Хаçатне Шупашкарта пичетлесе кăларнă. Шухăшласан тĕлĕннипе шалт хытса тăмалла пек. Пирĕн чăваш халăхĕ ĕлĕкрен-авалтан сăпайлă, çынна хисеплекен, кашни самантра ырă тума пултаракан халăх пулнă вĕт-ха. Пире вара çавăн пек хаçатпа агитацилеççĕ?

Кун пек тĕслĕхсем ытти регионсенче те пулман мар. Вĕсем çине хурав парса В.В. Путин ĕç коллективĕсемпе тĕл пулнă вăхăтра çапла каларĕ: «Кунта чи пысăк ответлăха туймалла. Влаçра пулас пулсан пирĕн хăватлă Раççей çĕр-шывне çавăн пек çынсем ертсе пырсан мĕн патне çитсе тухăпăр-ши тесе шухăшласа пăхмалла».

Çамрăксем мĕншĕн йăнăшаççĕ-ха? Эпĕ шухăшлатăп та, телевизор сахал пăхаççĕ, хаçат-журнал çителĕклĕ вуламаççĕ пулмалла тата пĕтĕмлетӳ тума пачах пĕлмеççĕ. Çавăнпа пĕрлех юлашки вăхăтра хăшĕ-пĕри ăнланса илме пуçланă пек те туйăнать. Акă ЛДПР 3-мĕш вырăнта пулнă пулсан, халĕ 4-мĕшне юлчĕ. Малашне те юлса-юлса пырасси куç умĕнчех.

Телевиденипе кăтартакан тавлашу (дебаты) вăхăтĕнче «Справедливая Россия» парти енчен хĕрарăм, парти ертӳçин 1-мĕш çумĕ пулнăччĕ. «ЛДПР пиншер çынна – интеллигент пулнă пенсионерсене вĕреннĕ вăхăта шута илмесĕр тивĕçлĕ ĕç стажĕсĕр хăварчĕ», – терĕ вăл. Мĕн тетĕр, ЛДПР ертӳçи хăй çĕр-шыва ертсе пыма хатĕрленнине мансах: «Старушка! Пенсионерка!» – тесе кăшкăрашма та пуçларĕ. Хăй те пенсионер пулни çинчен те манса кайрĕ пулас, ЛДПР хăйĕн суйлав умĕнхи агитаци брошюринче 100 палăрту тунине те. Унта çакăн пек палăртнисем те пурччĕ: «Пошлость, разврат должны уйти с экранов», «Мы должны быть благодарны женщинам, которые несут ответственность по рождению и воспитанию детей».

Хам енчен çакна палăртас тетĕп. Аслă шкулсенче вĕреннĕ тапхăра ĕç стажне кĕртмеллех. Пилĕк çул е ытларах та ĕçсĕр çапкаланса çӳремеççĕ вĕт-ха вĕсем. Çĕршывшăн кирлĕ çынсем пулса тухаççĕ, тĕрлĕ отрасльте ĕçлеççĕ, çĕр-шыв аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ. Çĕнĕ Дума çак çитменлĕхе пĕтерессе шанас килет.

Н. ПЕТРОВ,
ĕç ветеранĕ.
Нискасси ялĕ.

# «Салам сана, юратнă шкулăм»

## (А.Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи вăтам шкул 90 çул тултарчĕ)

20 ĕмĕр пуçламăшĕнче Калайкасси ялĕнче пурăнакан халăхăн пĕлтерĕшлĕ нимĕнле учреждени те пулман. Тури Кĕнерĕн çак касĕ çывăхри ытти ялсенчен уйрăлса тăман. 1918 çул пуçламăшĕнче яла Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен хастар та пултаруллă çын таврăнать – Степан Прокопьевич Любимов. Çавăн чухнех ăна Чикме уесĕнчи хресченсем хăйсен канашĕн пуçлăхне, партин уесри ертӳçине суйлаççĕ. Çак çын тăрăшнипе 1919 çулта Калайкассинче уесри пĕрремĕш ял хуçалăх артелĕ йĕркеленет. Çав çулах Калайкассисем Чикме уезд земствин Шатраккасси ялĕ патĕнче вырнаçнă, анчах арканма пуçланă агростанцин хăш-пĕр хуралтисемпе ял хуçалăх машинисене турттарса килеççĕ. Ял варринче пушă вырăнта икĕ пӳлĕмлĕ пĕр çуртне тӳрех купаласа лартаççĕ, унта вулавăш уçаççĕ. Ыттисенчен – шкулăн кайранхи тăватă класлă çуртне, коммунăн икĕ хутлă çуртне (халь унта клуб) тата ыттине те.

Граждан вăрçи лăпланса пынă май Калайкассинче шкул уçас ыйтăва та тăратса параççĕ. Пĕрремĕш учитель пулма Катькасра çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренсе пĕтернĕ Георгий Алексеевич Ефремов килĕшет. Шкулăн пĕрремĕш вĕренӳ çулĕ питĕ йывăр пулнă. Ялта выçлăх алхаснă, унсăр пуçне çырмалли-вуламалли те, программисем те, сĕтел-пукан та çитмен. Çавăнпа пĕрремĕш класс планне 1923 çулта тин вĕçлеççĕ. Выçлăха пула вĕренекенсем çуррине яхăн чакнă.

1920-мĕш çулсенче шкулта И.Г. Гурьев, А.В. Шувалова тата В.К. Кириллова ĕçленĕ. 1926 çулта Калайкассинчи пуçламăш шкулта пĕрремĕш кăларăм пулнă: 10 арçын ачапа пĕр хĕр ача пуçламăш пĕлӳ илни çинчен тивĕçлĕ документсем илнĕ. Вĕсенчен пĕри, А.Ф. Воронов, кайран тăван шкул ертӳçинче ĕçленĕ. Калас пулать, мĕн 1930-мĕш çулсем пуçламăшĕччченех ун чух пĕтĕм Чăваш енĕпе янăранă «Плуг» ял хуçалăх юлташлăхĕн пуçлăхĕ С.П. Любимов, ял-йышран Порфирий Рубцов, ял канашĕнчен Иван Скворцов тата яш-кĕрĕмрен Михей Таймасов шкул ĕçĕпе кăсăклансах, ăна асăрхасах тăнă. Çакă шкул пĕлтерĕшне татах та хăпартнă.

Шкулăн малтанхи тĕп çуртне (тăватă класлине) 1926 çулта çеç хатĕрлесе çитернĕ. Чӳречесем, кăмакасем пулман. Шалти ĕçсене тăвайман пирки вăл çичĕ çул ахаль ларнă.

1930-мĕш çулсем пуçламăшĕнче Калайкассинчи пуçламăш шкул тулли мар вăтам шкул пулса тăрать, ăна И.В. Сталин ятне тивĕçтернĕ. Ку шая çитме Каршлăхри хресчен çамрăкĕсен шкулне пĕтерсе унти вĕренӳ хатĕрĕсемпе вĕренекенĕсене Калайкассине куçарса килни хистет. Çавăн чухнех çывăхри «пуян» тенĕ çынсен хăшпĕр хуралтисене те шкула панă пулнă. Кĕçех шкулта вырăнти çынсем ĕçлеме пуçлани ăна татах та çирĕплетет, ятне çĕклет.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Калайкасси шкулĕ вĕрентӳре, ăс парас ĕçре самай сулăмлă утăмсем тăвать. Пахча ĕçĕпе мала тухнисем 1950-мĕш çулта çĕр-шывĕпех çӳресе килеççĕ. 1956 çулта шкул пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ пама тивĕçлĕ вĕренӳ заведенийĕ ятне илет. Çавна май Калайкассине аякри ялсенчен те вĕренекенсем килме пуçлаççĕ.

Шкул çултан-çул пысăкланса пырать. Аякри ачасене тата учительсене пурăнма 1963 çулта çул хĕррипех кирпĕч çурт купалаççĕ (1990-мĕш çулсенче ăна сӳтнĕ). Калайкассинчи вăтам шкул 1970 çулсем варринче районта ачасем чи нумай çӳрекен шкул пулса тăрать. Акă 1976–1980 çулсенче кăна кунта 552 çамрăк аттестат илнĕ. Таврари шкулсенче пуçламăш е тата сакăр çул вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Калайкассине малалла вĕренме çӳренĕ. Вĕренӳ процесĕ çичĕ çуртра пулса пынă пулин те вырăн çитменрен ачасене икĕ сменăпа вĕрентме тивнĕ. 1986 çулхи Пĕлӳ кунне Калайкассинчи шкулта вĕренекенсем çĕнĕ çуртра кĕтсе илнĕ. Вĕрентекенсен пысăк ăсталăхне шута илсе тепĕр пилĕк çултан кунта ятарлă педагогика класĕ уçаççĕ.

90 çул хушшинче Калайкасси шкулĕнче пин-пин ача ăс пухнă, 3 пине яхăн çын аттестат илнĕ. Нумайăшĕ республикипе паллă çынсем пулса тăнă: Андрей Алексеевич Алексеев – чăваш чĕлхине тĕпчекенĕ, çыравçă, чăваш чĕлхин орфографи словарĕн авторĕ; Анатолий Ермолаевич Горшков – филологи наукисен кандидачĕ, çыравçă; Евгений Евстафьевич Ерагин – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, Наци академийĕн Президенчĕ; Михаил Кондратьевич Костин – агроном, журналист, «Ял хуçалăх терминĕсен вырăсла-чăвашла словарĕн» авторĕ; Виталий Васильевич Костин – селекционер, ял хуçалăх наукисен кандидачĕ; Валериан Семенович Краснов – ял хуçалăх наукисен кандидачĕ, РФ ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата ыттисем те.

2000-мĕш çулсенчен шкул пысăк утăмсем туса аталанма тытăнчĕ. Тĕрлĕ проектсенче çĕнтерсе тата грантсене çĕнсе илме май паракан конкурссене хутшăнса шкул ĕçĕ, тытăмĕ тĕпĕ-йĕрĕпе улшăнчĕ. Пĕтĕм тĕнчери реконструкципе аталану банкĕн программипе усă курса шкул хăйĕн кӳлепине улмаштарчĕ, информаципе коммуникаци хатĕрĕсемпе пуянланчĕ. 2006 çулта ЧР Президенчĕн 200 пин тенкĕлĕх грантне, 2008 çулта РФ Президенчĕн 1 миллион тенкĕлĕх грантне, çав çулах ЧР Вĕрентӳ министерствин 50 пин тенкĕлĕх грантне, 2009 çулта 300 пин тенкĕлĕх грантне çĕнсе илме тивĕç пулчĕ.

Паянхи кун Калайкассинчи вăтам шкулта аслă категориллĕ 8 вĕрентекен, пĕрремĕш категориллĕ 15 вĕрентекен тăрăшать. Иккĕшне «ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» ят панă, пиллĕкĕшне – ЧР Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотисемпе, иккĕшне – РФ Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотисемпе чысланă.

2005 çултанпа шкулта спорт класĕ уçăлчĕ. Çамрăк спортсменсем В.Т. Моисеев тата В.В. Люцев ертсе пынипе районти тата республикăри ăмăртусенче тăтăшах мала тухаççĕ. Тĕнчипе паллă Вячеслав Акимов та, Алексей Моисеев та асăннă тренерсем пулăшнипе йĕлтĕр çинче «тăма вĕреннĕ».

Пурăнать тăван шкул, аталанать, утăм хыççăн утăм тăвать. Ӳлĕмрен те пысăк çитĕнӳсем тумалла пултăрччĕ!

Е. ЕРАГИН,
тăван ен культурине вĕрентекенĕ,
А. СТЕПАНОВ,
чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ.

# Интернет тыткăнне ан лекĕр

**Сăмах – сывлăх хуралçине**

Паян ачасем кунсерен Интернета, компьютера пăхăнма пуçлас хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Интернета пăхăннин паллисенчен палăрăмлисем – ачана компьютертан уйăрма питĕ йывăр пулни, Интернетпа çыхăнма май çукки ачана тарăхтарни, çакна пула вăл депресси туйăмне лекни. Çак паллăсене сисме пуçларăр пулсан педагогсемпе е психологсемпе калаçма ан ӳркенĕр, ан вăтанăр. Мĕншĕн тесен ача хăйне Интернет сетĕнче тупни, унта хăйне лайăх туйни унăн хăйне хакласси пĕчĕк шайра пулнипе çыхăнма та пултарать.

Çапла вара чи малтанах ача хăйне мĕнле тытнине асăрхамалла. Ача çинче «тиев» нумай пулни, ашшĕ-амăшĕ унран ытла нумай ыйтни ачана обществăна йĕркеллĕ хăнăхма май памасть. Çакнашкаллисене вара Интернет «çăтать» те. Сетьре хăвна мĕнле тытас килет çапла тытатăн, никама та пăхăнмастăн, хăвăн тĕнчене йĕркелеме пултаратăн. Çакă килĕшет те вĕсене. Çавăнпа ача пурнăçра çынсемпе хутшăнма юратмасть пулсан унăн Интернет «дозировкине» йĕркелесе тăма, контрольлесе тăма манмалла мар.

Çемьери проблемăсем, хирĕçӳсем, кама та пулин кирлĕ чухлĕ тимлĕх уйăрманни ачан кăмăлтуйăмĕ çине питĕ пысăк витĕм кӳреççĕ. Çавăнпа та тухса тăракан ыйтусене килĕшӳре, юратура сӳтсе явсан кăна çемьери ăшша тытса тăма пулать. Çапла майпа ачасене те ырăлăх енĕсене кăтартма, Интернета пăхăннине тепĕр ырă пăхăнупа çĕнтерме пулать: сывă пурнăç йĕркипе, çут çанталăкпа çывăх пулнипе, творчествăлла ĕçлесе, сăмахран, ӳкерчĕксем тунипе.

Ача урамра хăйĕн тантăшĕсемпе уçăлса çӳренине, вылянине ырламалла, анчах та пĕтĕмпех куçран вĕçертмелле мар. Тантăшĕсемпе йывăррăн хутшăнать пулсан хăвăр ачăра ыттисем çӳрекен секци-кружоксене çӳреме сĕнĕр. Çапла вĕсен интересĕсем те пĕр майлăрах пулаççĕ, апла – калаçасси те, мĕн те пулин сӳтсе явасси те. Анчах ачана контрольлесе тăмаллине пăрахăçламалла мар.

Эсир компьютер умĕнче мĕн чуль вăхăт ирттерме пултарассине малтанах туйса тăратăр-и? Монитор умĕнчен палăртнă вăхăтра уйрăлма манса кайни пулнă-и? Интернетра сирĕн кăмăл-туйăм хăпартланнине сисетĕр-и? Компьютер умĕнче хальхинчен ытларах вăхăт ирттерес кăмăл пур-и? Интернетсăр чухне вĕчĕрхенместĕр-и? Эсир компьютер умĕнче ытларах вăхăта ирттернĕрен юлташсемпе хутшăнасси хавшамасть-и? Интернет сирĕн малтанхи интерессенчен малта тăрать-и? Интернетра кампа та пулин паллашнă чухне хăвăра «хитрелетсе» кăтартмастăр-и? Интернетра мĕн тунине çемьерисенчен пытармастăр-и? Куç ывăннине, çурăм е пуç ыратнине, кĕлетке йывăрăшĕн виçи улшăннине сисместĕр-и? Интернетра нумай ларнăшăн сирĕн кун йĕрки улшăнмарĕ-и?

Çак ыйтусенчен ытларахăшне «çапла» тесе хуравларăр пулсан сирĕн те шутласа пăхмалли пур: эсир Интернет валли чĕретри тепĕр «парне» пулма пултаратăр.

**Л. ИВАНОВА,**

**Шалти ĕçсен пайĕнчен**

# Суя укçа кансĕрлĕх кăна кӳрет

Раççей Федерацийĕн Уголовлă Кодексĕн 186 статйин 1 пайĕнче пăхнипе суя укçа хатĕрленĕшĕн, ăна упранăшăн тата çаврăнăша кĕртсе янăшăн çирĕп явап палăртнă: тĕрлĕ лару-тăрăва шута илсе вăл 15 çул таранах ирĕкрен хăтарнипе тата пĕр миллион тенкĕ таран штраф панипе танлашма та пултарать.

Анчах та çакăн йышши преступлени тăвакансене ку та хăратмасть курăнать. Суя укçа пĕр вырăнтан тепĕр вырăна, региontан региона та çăмăллăнах куçма пултарать.

Кăçал районти шалти ĕçсен пайĕнчи следстви уйрăмĕ суя купюрăсем тĕлĕшпе 5 уголовлă ĕç пуçарчĕ. Апрель уйăхĕнче Ивановка ялĕнче вырăнаçнă автозаправкăна пĕр пин тенкĕлĕх суя купюра лекет. Март уйăхĕнче Муркашри «Универмагра» тавар туянакан кассира 1000 тенкĕлĕх суя укçа тыттарнă. Сентябрь уйăхĕнче вара пĕр пин тенкĕлĕх укçана улăштарма тесе пĕр гражданин Перекет Банкĕн Мăн Сĕнтĕрти хушма офисне пырать. Виçĕ хутĕнче те – 1997 çулти пĕр пин тенкĕлĕх купюра тĕслĕхĕсем.

Çавăнпа та аякри хуласене ĕçе тухса çӳрекенсене те, укçапа ĕçлеме тивекен должноçри çынсене те тимлĕх пирки тепĕр хут аса илтерни ытлашши пулмĕ тесе шутлатпăр. Кĕсьере суя укça çӳрени вара кансĕрлĕх кăна кӳрет.

**И. ВАСЮХИН,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

**ГИБДД асăрхаттарать**

# Хĕллехи каникул: тимлĕ пулăр

Шкул ачисен хĕллехи каникул вăхăчĕ çитрĕ. Çапла вара çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх та мала тухать.

Пирĕн республикăра ачасем хутшăннипе 11 уйăхра 216 инкек пулса иртнĕ. Вĕсенче 229 ача суранланнă, 6-шĕ вара ĕмĕрлĕхех куç хупнă. Пирĕн районти кăтартусене тишкерсен те çак лару-тăру лăпкă марри палăрать: ачасем хутшăннипе 4 инкек пулса иртрĕ, вĕсенче 5 ача суранланнă.

Çавăнпа та хĕллехи каникул умĕн ачасене те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене те тимлĕх пирки тепĕр хут аса илтеретпĕр. Çанталăк час-часах улшăнса тăрать, çулсем кĕске самантрах пăрпа та витĕнеççĕ. Асăрханулăхпа тимлĕхе самантлăха та çухатмалла мар. Талăкăн тĕттĕм вăхăтĕнче те ачасене çул çинче курма пулать. Ашшĕ-амăшĕн çакна шута илсе ачисен çиелти тумĕсем çине çутă пайăркисене каялла сирсе яракан пусма татăкне çĕлесе памалла.

Машинăсенче ачасене лармалли ятарлă креслосем пулмалла. Хăрушсăрлăх пиçиххийĕсене çыхмалла. Ачасем вылямалли вырăнсем çулсем хĕрринче пулмалла мар, тăвайккисем те машинăсем çӳрекен çулсем тĕлĕнче вĕçленмелле мар.

Çак тата çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх правилисене тĕрĕслессипе тата профилактика мероприятийĕсене ирттерессипе декабрĕн 26-мĕшĕнче «Тимлĕ пулăр – каникул!» операци пуçланать. Вăл январĕн 10-мĕшĕччен пырать.

**С. ИВАНОВ,**
**районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ, полици капитанĕ.**

**Редакци почтинчен**

# Çапла иртет кунти ĕç-хĕл

Ĕçпе вăрçă ветеранĕсен Каршлăхри интернат çуртĕнче 25 ветеран пурăнать, вĕсенчен 13-шĕ вара 1 тата 2 ушкăнри инвалидсем. Кунта ĕçлекенсем вĕсен пурнăçне хавхалануллăрах тăвас тесе тăтăшах тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ, çавăн пекех вĕсем валли библиотека та ĕçлет. Коляскăпа куçса çӳрекен инвалидсене социаллă ĕçчен пӳлĕме кайса тĕрлĕ кĕнеке парать. Ĕçе çапла майпа йĕркелени вĕсене пĕчченлĕхре туйма памасть.

Куçĕ япăх курнипе инвалида тухнă В.Л. Леонидов пирĕн патра виççĕмĕш çул пурăнать ĕнтĕ. Çак тапхăрта вăл хăй тĕллĕн апатлану пӳлĕмне çӳреме, уçăлма тухма хăнăхрĕ. Пачах та утайман инвалидсене коляскăсемпе уçăлма илсе тухатпăр. Пирĕн патра кашниех хăй валли чун йăпатмăш тупать: пĕрисем çыхаççĕ, арлаççĕ, теприсем вулаççĕ, шашка-шахматла выляççĕ. Акă Серафима Григорьевна тĕрленине пăхатăн та чун савăнать. Вăхăта усăллă ирттерни кăмăл пусăрăнăвне сирме май парать. Çавăн пекех кунта пурăнакансене саламлама тĕрлĕ концерт программипе килеççĕ.

**В. КРЮЧКОВА,**
**социаллă ĕçчен.**

| Местное время | среда 28 декабря | | | | четверг 29 декабря | | | | пятница 30 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +1 | -1 | -2 | -2 | -3 | -4 | -5 | -5 | -4 | -3 | -1 | -3 |
| Давление мм | 722 | 725 | 725 | 731 | 736 | 742 | 747 | 748 | 746 | 746 | 746 | 747 |
| Влажность % | 93 | 83 | 93 | 91 | 89 | 88 | 89 | 90 | 87 | 88 | 92 | 90 |
| Ветер м/сек | З 10 | З 8 | З 10 | С-З 9 | С-З 9 | С-З 7 | З 6 | Ю-З 5 | Ю-З 6 | Ю-З 7 | Ю-З 6 | Ю-З 6 |
| Солнце восход/заход | | 09:24 | 16:24 | | | 09:24 | 16:25 | | | 09:24 | 16:26 | |
| Луна восход/заход фаза | | 10:56 | 21:26 | | | 11:12 | 22:41 | | | 11:26 | 23:54 | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:**
**Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб.**
**Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова.**
**Доставка бесплатно от 10 куб. м.**
**Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07.**

**Продаю сено тюкованное, грабли навесные. Тел.: 8-927-848-28-48.**

* * *

**Продаю корову и телку. Тел.: 8-927-850-03-42.**

* * *

**Мебель от производителя, цены ниже рыночной (шкафы, кухни, стенки, прихожие, матрацы разных размеров). Тел.: 8-903-358-67-19, 8-927-859-65-51. 7-8.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-5.**

* * *

**Возьму в аренду торговую площадь для реализации алкогольной продукции на выгодных для вас условиях. Тел.: 8-919-679-72-71. Возьму в аренду торговую площадь на длительный срок. Тел.: 8-903-322-24-88. 4-10.**

* * *

**Большесундырскому райпо срочно требуются электрик-электромонтер, повар для работы в Юнгапосинском кафе. Тел. для справок: 69-5-46.**

* * *

**Çулталăкран иртнĕ хĕрлĕ-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-848-54-63, 60-1-94.**

* * *

**Требуются швеи с опытом работы во вновь открывающийся цех в с. Моргауши. Соц. пакет. Тел.: 8-927-667-37-30, 8-927-668-29-18. 1-2.**

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1209, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1236, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1220, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1203, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6100 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

В соответсвии с постановлением администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 23.12.2011 года № 118 проводятся публичные слушания о переводе земельного участка с кадастровым номером 21:17:100101:145 из категории «земли сельскохозяйственного назначения» в категорию «земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земель для обеспечения космической деятельности, земель обороны, безопасности и земель иного специального назначения» в целях выполнения федеральной программы-строительства передающей радиотелевизионной станции для цифрового телевидения. Время проведения – 23 января 2012 года в 13 часов 00 минут. Место проведения: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Москакасы, улица Московская: дом 54 в здании администрации Москакасинского сельского поселения.

* * *

В объявлении собственника земельной доли Дублевой Анны Ильиничны о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию месторасположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 2 апреля 2011 года в № 23 (7877) стр. 4, во 2 колонке, в 13 абзаце снизу, допущена опечатка. Вместо «ЗАО «Колос» следует читать «КДП «Гигант».

* * *

В соответствии с постановлением главы администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района от 21 декабря 2011 года, № 94 11 января 2012 года состоятся публичные слушания по вопросу перевода земельного участка из категории «земли сельскохозяйственного назначения» в категорию «земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения» в целях строительства радиотелевизионной передающей станции цифрового телевидения по адресу: Чуашская Республика, Моргаушский район, д. Ярославка, ул. Центральная, д. № 5 в здании Дома культуры. Кадастровый номер земельного участка 21:17:130103:181. Начало 14 часов 00 минут.

* * *

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики опубликовала в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 17.12.2011 №102 (7956) на стр. 3 результаты аукциона от 18 ноября 2011 г. на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики. В данном объявлении после слов: «Победителем по лоту №5 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:090604:56, местоположение: Установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир строение. Участок находится примерно в 70 м от ориентира по направлению на юго-запад. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Москакасы, ул. Озерная, дом 3, площадью 5350 кв.м.)» следует читать: «признан Столяров Андрей Михайлович».

* * *

В объявлении о предоставлении земельного участка на праве долгосрочной аренды с кадастровым номером 21:17:250501:88, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 10.12.2011 №100 (7954), на 6 стр. в разделе «Объявления», допущена опечатка: вместо «земли сельскохозяйственного назначения» следует читать «земли населенных пунктов».

## Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1217, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:061901:1273, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Большие Татаркасы, ул. Центральная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1603 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

ЛЮБИМЫЙ ФУРГОНЧИК
распродажа обуви зима 2012
все 700
постельное белье 350р.
600р производство Россия
28.12. с 9-13 ч. в ДК с. Б.Сундырь
28.12. с 14-18 ч. в ДК с. Моргауши

Отдел министерства финансов Чувашской Республики по Моргаушскому району выражает глубокое соболезнование начальнику отдела В.А. Ивановой в связи тяжелой утратой – смертью матери

**ЗАХАРОВОЙ**
**Марии Ивановны.**

Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта делопроизводительте ĕçлекен С.А. Львовăн

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 27.12.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4364.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.